

# Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

2024 Çемье çулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Çамрăк çемьесене – тĕрев

ДЕМОГРАФИЯ НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ



**Республикăра пурăнакан тата 166 çамрăк çемье çурт-йĕр туянма е хăпартма патшалăх пулăшăвне тивĕçĕ. «Çамрăк çемье» программăпа хушма финансировани пулнă, çак тĕллевпе республика бюджетĕнчен тата 157,5 млн тенкĕ, муниципаллă пĕрлĕхсен бюджетĕнчен 18,6 млн тенкĕ уйăрнă.**

Программăна хутшăнакан çемьесем çурт-йĕр хакĕн 30–35% чухлĕ субсиди илме пултараççĕ. 2024 çулта республикăра пурăнакан 457 çамрăк çемьене пулăшма палăртнă. Ку кăтарту пĕлтĕрхипе танлаштарсан 35% ытларах. Кăçал 173 çемье çăмăллăхпа усă курса çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. «Çамрăк çемье» программа «Çурт-йĕр тата хула хутлăхĕ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пурнăçланать.

Çак кунсенче Вăрнар тăрăхĕнче пурăнакан çамрăк çемьесем те патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ. Округ пуçлăхĕ Надежда Никандрова вĕсене социаллă тӳлеве илме свидетельствăсем панă. Пĕтĕмпе вырăнти тата республикăри бюджетсенчен 6,6 млн тенкĕ уйăрнă.

Вăрнарта пурăнакан Анастасия Алексеева савăнăçне пытармасть: «Çамрăк çемье» программăна хутшăнма эпир пĕлтĕр черете тăтăмăр. Патшалăх çамрăксене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма курăмлă пулăшу кӳни савăнтарать. Манăн мăшăр çар çынни, хальхи вăхăтра ятарлă çар операцине хутшăнать, Тăван çĕршыва хӳтĕлет. Эпир социаллă тӳлеве илнишĕн питĕ хĕпĕртерĕмĕр, патшалăха чĕререн тав тăватпăр».

**Оксана СЕМЕНОВА**

## Нумай ачаллисем тимлĕхре

**2023 çул пуçламăшĕ тĕлне черетре тăнă пилĕк е ытларах çула çитмен ачаллă çемьесене пурне те çитес пилĕк çулта çурт-йĕрпе тивĕçтермелле – çакăн пек пысăк тĕллев лартать правительство умне Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев. Унашкаллисем республикăра 480 енне çемье.**

Нумай ачаллисем хăйсен хăтлă кĕтесĕллĕ пулччăр тесе юлашки çулсенче Чăваш енре чылай ĕç туса ирттернĕ. 2021–2023 çулсенче республика правительстви пулăшнипе ку ушкăнри 267 çемье çурт е хваттер илнĕ.

Кăçал пилĕк е ытларах ачаллă мăшăрсенчен 157-шне çурт-йĕрпе тивĕçтерме палăртаççĕ. Ку тĕллеве пурнăçлама республика бюджетĕнчен 833 миллион тенкĕ тăкаклама пăхса хăварнă.

**Хамăр инф.**

## Çĕнĕ наци проекчĕ пулăшĕ

**Çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен çĕршывра çĕнĕ наци проекчĕ – «Çемье» – старт илет. Вăл мероприятисен шучĕпе те, укçа-тенкĕ хывнин калăпăшĕпе те чи масштаблисенчен пĕри пулĕ.**

Раççей Президенчĕ Владимир Путин палăртнă тăрăх, ăна çемье институтне çирĕплетме, мăшăрсен ăнăçлăхне тата пурнăç пахалăхне ӳстерме ĕçе кĕртеççĕ.

«Çемье», чăнах та, çемье хаклăхĕсене саракан, ачасем çуратса тĕрĕс воспитани пама лайăх условисем тума пулăшакан проект пулмалла. Унта тĕрлĕрен пĕлтерĕшлĕ çĕнĕлĕхсем кĕрĕç:

- Амăшлĕхне тата ачалăха сыхлассипе çĕнĕ комплекслă программа.
- Ачаллă çемьесене пулăшу кӳмелли мероприятисем.
- Çемьесен пурнăç пахалăхне тата демографи лару-тăрăвне лайăхлатмалли мерăсем.

## Пур енĕпе те пултаруллă

**Раççейре финанс ыйтăвĕсене чи лайăх пĕлекен çемьене шыраççĕ. Ăна Пĕтĕм Раççейри Сбережениссемпе инвестицисен çемье фестивалĕнче палăртĕç. Нумаях пулмасть 23 субъектра конкурсăн вырăнти тапхăрĕсем иртнĕ ĕнтĕ. Маттур çемьесем финанс ăслăлăхĕн ăмăртăвне пухăннă.**

Конкурс йĕрки питĕ интереслĕ. Конкурсантсем тĕрлĕрен тĕрĕслевсенче вăйă балĕсене – алтынсене – çĕнсе илнĕ, вĕсем «перекет кĕнекинче» пуçтарăнса пыраççĕ. Чи нумай алтын пухакансем – регионти çĕнтерӳçĕсем – сентябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври федераллă тапхăрта тупăшаççĕ.

Фестивалĕн Чăваш енри тапхăрне Вăрнар округĕнчи пултаруллă çемье те хастар хутшăннă. Канашри финанспа экономика колледжĕнче иртнĕ конкурсра Вăрнар округĕн чысне Маловсем хӳтĕленĕ: Василий Иванович, мăшăрĕ Ираида Васильевна тата вĕсен хĕрĕ Эвелина.



Маловсем.

Укçа-тенкĕ ăслăлăхĕ енĕпе квест, мастер-класс, лекцисем, квиз, ĕçлĕ вăйă-симулятор... – тем тĕрлĕ активлăхсем витĕр тухнă участниксем. Финанс тивĕçтерĕвĕсемпе тĕрĕс усă курассипе те, сбережениссемпе инвестицисен финанс культурине пĕлнипе те. Вăрнарсем мĕнпур заданисене ăста пурнăçласа фестивальте хăйсене лайăх енчен кăтартнă.

Палăртса хăвармалла, Маловсем – округра хăйсен ĕç-хĕлĕпе, хастарлăхĕпе паллă, хисеплĕ çемье. Мăшăр пурнăçне сăваплă профессие – çамрăк ăрăва пĕлӳ тата воспитани парассине – халалланă. Унта чăннипех те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Çемье пуçĕ Василий Иванович тĕрлĕ çулсенче округри вĕрентӳ учрежденийĕсенче тимленĕ, вĕсен ĕç-хĕлне ертсе пынă. Хальхи вăхăтра – Вăрнарти ача-пăча пултарулăх çурчĕн директорĕ. Мăшăрĕ Ираида Васильевна та педагог, кĕçĕн классенчи ачасене вĕрентет. Пĕчĕккисене 28 çул ĕнтĕ пĕлӳ тĕнчипе паллаштарать вăл.

Хĕрĕсем те Маловсен ашшĕ-амăшĕ пекех пур енлĕ пултаруллă: вĕренӳре те, обществăлла ĕçсенче те. Чăннипех те хисепе тивĕçлĕ, тĕслĕхлĕ çемье.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

## Йĕркене пăхăнмалла

**Амăшĕн капиталĕ – çемьесене патшалăх енчен кӳрекен курăмлă пулăшу. Ун майĕпе уйăракан укçана саккунпа палăртнă тĕллевсемпе усă курма юрать. Çурт-йĕр туянма е хăпартма, ачасене вĕрентме, амăшĕн пенсине ӳстерме...**

Палăртмалла, çемьесем пуринчен ытла пĕрремĕш варианта суйлаççĕ – укçана çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма яраççĕ. Анчах хваттер е çурт туянма амăшĕн капиталĕпе усă курнă чух хăйĕн йĕрки пур. Саккун требованийĕсене çирĕп пăхăнмалла. Сăмахран, патшалăх пулăшăвĕпе туяннă куçман пурлăхра çемьен кашни членне пай уйăрса памалла.

Ку йĕркене Росреестрăн Чăваш Республикинчи Управленийĕн пай пуçлăхĕ Эльби Николаева çапла ăнлантарать:

– Амăшĕн капиталĕпе çыхăннă сделкăсем хăшпĕр чарусемпе тата саккун требованийĕсемпе çыхăннă. Тĕп ыйту – хваттерти е çуртри пайсене мĕнле тата хăш тапхăрта уйăрмалла. Çакăн çинчен килĕшĕве нотариус патĕнче е ахаль çыру евĕр те хатĕрлеме пулать. Ку ĕçе нотариус пурнăçлать-тĕк, пĕтĕм документсене вăл хатĕрлет. Çав шутра пай виçисене шутлама та пулăшать. Килĕшĕве хăвăр çыратăр-тăк, пĕтĕм расчетсене хăвăрăн палăртмалла.

Амăшĕн капиталĕпе туяннă хваттер-çуртра ачасене пайсемпе тивĕçтермелли вăхăта та çирĕплетнĕ. Ку тапхăр – çемье банк умĕнчи парăма пĕтĕмĕшле татнă хыççăн çур çул иртиччен. Банк килĕшсен, пайсене тӳрех те уйăрма юрать. Хваттере кредитсăр илнĕ пулсан та килĕшĕве сделка вăхăтĕнче çырма пулать.

Шел те, хăшпĕр ашшĕ-амăшĕ ку йĕркене çирĕп пăхăнманни тĕл пулать. Теприсем ачасен прависене уямаççĕ – вĕсем ахаль те пĕрле пурăнаççĕ, пайсене уйăрни ним тума та кирлĕ мар тесе шутлаççĕ. Анчах саккун требованийĕсене пăхăнманшăн явап тытма тивет. Ачасен прависене хӳтĕлесе прокуратура суда тухнă тĕслĕхсем нумай республикăра.

Ку çемьесем кайран хваттере сутас-тăк, туянакансем те хăрушлăхра. Вĕсенче ачасене пайсене уйăрса паманни палăрсан, сделкăна суд урлă пăрахăçлама пултараççĕ.